

**Яков УХСАЙ**

## 1976 ç.
## Март

**1.** Пĕрремĕш уйăх та, иккĕмĕш те, пĕри Мускавра, тепри Шупашкарта иртсе кайрĕ, асра пĕр ăслă япала та тăрса юлмарĕ. Икĕ уйăх хушшинчи вăхăта тарăхса иртертĕм. Хăйсене халăхран çӳлте пек куракан чăвашсем хăйсене чăваш тесе Мускавра çӳреççĕ, Мускавра хăйсен чăвашлăхне пытараççĕ — манăн атте чăваш, анне вырăс пулнă, теççĕ.

Каллех Кĕлпукпа ларатăп. Вăрăм, сапаланчăк сăвăсем тухаççĕ ватă пуçран. Паян машинисткăран «Кĕлпук» илтĕм, ун çумне çĕнĕрен çырнисене хушас килет те хама хам ватăлла çырасса ĕненсех каймастăп.

**2.** Пилĕк сехетре тăтăм, унччен Твардовский пирки шухăшласа выртрăм. Ун пирки çырмалла та — шухăшсем кĕтӳпе килеççĕ, сĕт паракан ĕнисем çук. Çĕнĕрен «Кĕлпук мучи кĕреки» сăвва çыратăп. Сарăлса кайрĕ, хĕсĕнмест. Ватăлсан çапла, сăмах нумай, тĕшши сахал.

**12.** Егор Исаевпа кĕрӳ валли кĕрĕксем илес тесе Харитонов патне кайрăм. Кабинечĕ лайăх. Чейĕ те, курăк чейĕ, тутлă. Пĕвер чирĕнчен кирлĕ, тет. Таçтан Югославирен килмелли кĕрĕк пирки калаçрĕ. Михаил Николаевич ятлă вăл. Темле ĕнтĕ, кĕрĕк пулать-и? Эпĕ хам çинчен шухăшлатăп, куçкĕски çине пăхмастăп. Эпĕ хама сӳтĕк пек, чăн-чăн пурнăçран татăлса идейăсем хушшинче çӳренĕ пек туятăп. Çынсем хырăмпа тум çинчен анчах шухăшлаççĕ. Эпĕ пур — чăваш чĕлхи çинчен. Кама кирлĕ вăл халь? Дедушкина-и? Эпĕ, чăн пурнăçри ухмах идеалист,

çӳретĕп те хам мĕншĕн çуралнине пĕлместĕп. Кама кирлĕ эпĕ. Ачасене-и? Никама та кирлĕ мар.

Хĕл кăнтăрла йĕпенкелет, каç каллех хытать, парăнмасть. Паян эрнекун, чăваш кунĕ. Кĕлпук çинчен çырнă ĕлĕкхи сăвăпа хăшкăлтăм. Ķама кирлĕ? Никам та вулас çук. Чваш хăйĕнчен хăй сивĕннĕ, ун хăйĕн пек пурăнас, шухăшлас чунĕ çук. Хăйĕн чунне çухатнă халăх нумай пурăнмасть, çĕр питĕнчен çухалать. Чăваш республики пурри сисĕнет-и? Верховнăй Советлă Аслă Совет текен çук. Ăна Аслă Канаш теме ун çуртĕнче чăвашла машинка та çук. Ĕлĕк чăваш пулнă Н. пур. Вăл хăй те, ачи-пăчи те чăваш мар. Эпĕ хам та такам? Чăвашăн та, лашан та малашлăхĕ çук.

**13.** Килте ларатăп, Кĕлпук пирки çыратăп, вăрăм пирки тарăхатăп. Письма: Е. Исаеву, А. Власенко.

Обкомра кăмăллă çын Журавлев ĕçлет. Вăл ĕлĕк сăвă çырнă пулмалла, халĕ мана пĕр татăк çырса пачĕ.

Хреслĕ-мреслĕ çулпала
Хĕрлĕ питлĕ хĕр пырать.
— Пар-ха, тесен, памарĕ,
Кайран хамăн тăмарĕ.

Тиркемелли çук, халăхла çырнă. Кун пек сăвă пĕр-пĕр Ю. П. пуçне тĕлĕкре те пырса кĕмест. Пырса кĕмест тетĕп, мĕншĕн тесен унăн пуçĕнче шалта мими ĕçлемест, тултан кĕрессе анчах кĕтмелле.

**14.** Ĕнер ыйăх умĕн Гейне сăввисене вуласа выртрăм, ватă чухнехи вырăн çинчи юрату ĕнтĕ ку. Тахçанхи-авалхи Мария Турченко хĕре аса илтĕм, ирхине ман пуçра сонет çуралма тытăнчĕ.

Кржижановский академик те
Сонет çырса çунать пек астăватăп.
Çулпа ман вăхăт иртнĕ, эпĕ ватă,
Чунпа çеç çамрăк чухнехи тĕлте.

Лерелли йĕркисем те пуçра пур, сăвăланса çитмен-ха. Пуç сăвă çырма сӳтĕк, хырăм апат ыйтать. Кафене кайса килмеллех.

**19.** Эрнекун. Эрне иртсе кайнине сисмерĕм, «Кĕлпука» хатĕрлесе издательствăна патăм, Тукайăн «Качакапа сурăх» юмахне куçарса лартăм. Ĕнер Лисаран çыру килчĕ. Укçа пирки çырать, мана вăрçать.

М. Федотов профессор килсе ларчĕ. Шăл кăларттарнă, усал мар. Тукай кĕнекине, хам куçарнине, парса ятăм. Çур килсе çитет, çанталăк хытă тărать, парăнмасть, ирхине сивĕ. Тукай юмахне куçарса лартăм, ытлашши вăрăмлатасран хăратăп.

**21.** Ленăран, Волковран çыру илтĕм. Кичем. Ху шухăшласа кăларнă, пуçри тĕнчере анчах пурăнас килет, йĕри-тавра никама та шанма çук. Пушкин тĕрĕс çырнă:

Порой опять гармонией упьюсь,
Над вымыслом слезами обольюсь.

Вымысел, шухăшласа кăларни, ăна ху ĕненни йывăр пурнăçра чуна кантарать.

**22.** Манса кайиччен çырса хăварас. Манăн кĕнекере Çерçи Ваçлейĕ пур. Вăл чăнах та пурччĕ, Павăрнай Павăлăн ачи Çеркей, шалти касра тайлăк лутра пӳртре пурăнатчĕ. Салтакра пулнăччĕ, янахĕ катăкчĕ. Ун ашшĕ Çуçмет йăхĕнчен, ялта уй чӳк ирттернĕ чух пуç пулнă. Ун шăллĕ Павăрнай Макçăмĕ пурччĕ. Хут та, вырăсла та пĕлместчĕ, ăслă шутланатчĕ. 1937 çул ăна тытса кайнă. Унăн айăпĕ пĕрре: колхоз тунă чухне вăл Сталина шуйттан тенĕ тет. Тепĕр Павăрнай тавраш-

не маслабай тенĕ, унăн кантăр çăвĕ çаптармалли, маслабай пурччĕ. Вăл пире хăтаччĕ, ун ывăлне пирĕн Анушша аппа качча кайнăччĕ.

Паян вырсарникун. Тукайăн «Качакапа сурăх» юмахне куçаратăп.

**24.** Ирхинех тăрса апат çиме каятăп. Шупашкарта ясара çÿреме юриех мунча ларттарнă чиновниксене хупнă, тет, мунчине такамсем çунтарса янă, тет. Çапла ĕнтĕ, халăх ĕнси çинче ларакансем, хăйсем те мунчара пулнисем çунтарса яртарнă, йĕрĕ ан юлтăр! — тенĕ.

Çанталăк ирхине те ăшă, çур çывхарнă, кăшкăрса ярасси анчах тăрса юлнă.

Ĕнер А. Емельяновпа калаçрăм, пĕрле апат çирĕм. Литература тавра çапкаланса, укçа çапса пурăнакансем нумайлансах кайрĕç, издательствăна ĕçе пырса кĕреççĕ те пĕр намăса пĕлмесĕрех писательсем пулса тăраççĕ, чăвашла пĕлмесĕр çырнă япалашкисене вырăсла куçарттарма чăваш укçине сапалаççĕ. Директора кĕрсе писатель пулни ĕлĕк те пурччĕ, халĕ те пур.

Письма: Г. Волкову, Лене.

Тукайăн юмахĕпе лартăм, хăйĕнчен аякка пăрăнса кайрăм. Ĕлĕкхине, вилнине чĕртмелле, хăвăн пек улăштармалла. Унсăрăн кичем, хальхи çынна кирлĕ мар. Ĕлĕкхи юмахсем хальхи çынсене, сысна ĕрчетес тесе çеç калаçакансене, кирлĕ-и?

Издательствăра ларакан çынсене куратăп та: вĕсен пĕрин те халăх чунĕ çук. Çиеççĕ, ĕçеççĕ. Пĕр чăвашла кĕнеке те тирпейлĕ тухмасть. Сысна ĕрчетес пирки çеç пухусенче те сăмах, хаçатсенче те сăмах. Кăçал утмăл пиллĕк тултаратăп, чăваш литератури ÿснине, ÿсме шанчăк панине курмарăм. Шелепи. Элкер. Хусанкай. Пĕрин те пурнăçра чăн-чăн хисепĕ пулмарĕ. Пĕр-пĕр Гиндельман, пĕр-пĕр Харитонов — чаплă, пуян, авторитетлă. Поэт, чăваш поэчĕ кам? Ăна деятель мар, çын вырăнне те хумаççĕ.

**Август**

**12.** Пуçри шухăш та саланса каять, нимĕнле ĕçе те кÿлĕнсе пулмарĕ. Çумăр хыççăн çумăр. Ĕнер Мускавпа калаçрăм, паян «Тутимĕре» вырăсла куçарма ятăм.

Письма: Хамидуллиной — Уфа, дочери Елене, Фальку, Панченко, Щипачеву — Москва. Пĕр ĕç те кирлĕ пек пулса пымасть, пуçра шухăш тĕвĕленсе çитмест, çĕрĕк çип пек сÿтĕлсе каять. Кĕçĕр тĕлĕкре эрех ĕçнĕ, халăх калашле, хуйха-тăр, ырра мар.

**27.** Август унчченхи уйăхсем пекех ĕçлĕ пулмарĕ, тахçанхи «Шăллăм» поэмăпа аппаланнипе иртсе кайрĕ. Мускавран, ытти хуласенчен писательсем килмелле, чăваш халăхĕ вырăс патшалăхне кĕнĕренпе 425 çул тултарнă вăхăта уявлама çакăн пек шава шухăшласа кăларнă. Килекеннисем хушшинче пысăк ятлисем çук. Манăн кун пек ăссăр япалана хутшăнас килмест, Шупашкартан тухса тарас килет. Манăн вăхăт иртет те иртет, ăс хутшăнни, чун ĕçпе лăпланни çук.

**Сентябрь**

**1.** Çу иртсе кайрĕ, пыл тути каламарĕ. Çумăр та çумăр халăха йăлăхтарса та, çилентерсе те çитерчĕ. «Шăллăм» поэмăн çĕнĕ вăрăм вариантне пĕтертĕм. Хамăн кăмăла ларса çитмерĕ, ытла чараксăр вăрăм туйăнчĕ, ватăлса пынипе, сăмах тутимасине сисменнине систерчĕ. Кĕске çырас пирки шухăшлатăп çеç. Ĕнер С. В. Ботвинникран çыру та, Иванов сăввисене куçарнисене те илтĕм.

Письма: Ленинград — С. Ботвиннику, Москва — В. Шкаеву.

**16.** Письма: Москва — Елене, Панченко. Кемерово — Бекшанскому. Москва — Н. Старшинову, В. Кочеткову.

**Декабрь**

**2.** Ĕнер больницăран тухрăм. Письма: Москва — Елене, Панченко, Вологда — Романову.

**6.** «Хура кураксене», тахçанах, 1959 çултах çырма тытăннă япалана, тепĕр хут алла тытрăм. Халиччен никам та каламан шухăша калас килет те... йывăр, вăрăмланса каять, шухăш кантра явнă пек вĕçленмест. Çичĕ сехетре каçхине выртса çывăртăм та 11 сехетре сиксе тăтăм. Çынсем çывăрма выртсан çырма лартăм.

**18.** Виçĕмкун Мускавран таврăнтăм. Çанталăк йĕпенсе тăчĕ, паян сивĕтнĕ, хĕллехи пек пулнă. «Кураксене» çырас терĕм, вырăнтан хускалмасть. Ĕлĕкхи хавослăх çук, ним те ыратмасан та, пуç ывăнмасан та, ĕç пымасть. Эпĕ чăваш литературин малашлăхне шанма пăрахрăм. Ытлашши вырăсланни тăван чĕлхене пĕтерсех лартрĕ, пурнăçран кăларса пăрахрĕ. Виçĕмкун журналистсен съездĕнче пултăм, «Коммунизм ялавĕ», «Пионер сасси» тенине анчах илтрĕм, урăх чăвашла сăмах пĕр çын çăварĕнчен те тухмарĕ. Виççĕмĕш сăмах «Канаш». Канаш районĕ пуррипе. Никама та тиркеме те, айăплама та çук. Самани çапла. Литературăра «Лишние люди» термин пур. Онегин, Печорин. Вĕсем историе кĕрсе юлнă. Чăваш писателĕсем кĕрес çук. Вĕсем халĕ никама та **кирлех** мар.

## 1977

## Май

**6.** Москва — Г. Волкову, Башкирия — Ольге.

Ман çу вăхăчĕ çӳресе (Пушкăрт, Волгоград), чирлесе иртсе кайрĕ, ноябрь уйăхĕнче, ун варринче тин ĕçе тытăнтăм, «Çĕр-Аннемĕр кĕнекине» çырса пĕтерес терĕм.

## Ноябрь

**26-мĕшĕ,** хам 67 çул ĕлĕк **çуралнă кун**. Ку кĕрхи уйăх хăйĕн авалхи сивĕ йăлине пĕтĕмпе маннă, урса кайнă. Пĕр тăтăшах йĕпе-сапаллă çанталăк тăчĕ-тăчĕ, нумай пулмасть-ха сивĕтрĕ. Малтан юр çунăччĕ, вăл ирĕлсе пĕтрĕ. Паян каллех вĕтĕ юр ӳккелесе тăрать.

«2011 çулта çуралнă поэта» сăвва тахçанах шухăшласа хунăччĕ. Ăна паян çырма тытăнатăп. Мĕнле шăранса тухĕ? «Текерлĕк» ятлă япалана вĕçне çитермерĕм, вăхăтлăха пăрахрăм. Тытăннă сăвва 60 йĕрке çыртăм. Пушкăрт обком секретарĕнчен Ахунзяновран çыру илтĕм, чипер, ăслă çырнă. Вăл тăрăшнипе Пишпӳлекпе Пелепей чăвашĕсен пурнăçĕ йĕркеленмелле. Ленăран Шупашкара ачипе килес пирки телеграмма илтĕм.

**27.** Вырсарникун. «2011 çулта çуралнă поэта» сăвва çыртăм, чиперех пычĕ, малтан кăшт такăнчĕ. Письма: Бижбуляк — К. Иванову, Казань — А. Федорову письмо и бандероль, Слакбаш — родным, Москва — Г. Волкову.

**28.** Лена килессе кĕтнипе пурăнатăп, çавăнпа йĕркеллĕ ыйхă та çук. Кая юлса вуникĕ сехет хыççăн выртсан та, пĕр виçĕ сехет тĕлĕнче вăрантăм пулĕ.

«2011 çулта çуралакан поэта» сăвă пуçра. Ăна шăплăхра, пĕчченлĕхре яла кайса çырасчĕ. Çук, ĕмĕтленни тухмасть, пурнăç эпĕ ĕмĕтленнĕ пек пулса пымасть, чуман лаша пек тапать.

Ленăпа Андрей те пĕчĕкки — виççĕн килсе çитрĕç, пысăк хур илсе килнĕ. Ăна çисен, тутлă çывăрнă. Нумайччен калаçма тивсен, шухăшсем саланса каймарĕç. Çыртăм, сыпăксем вăрăмланни килĕшмест пек хама.

## Аслă кăрлач

**1.** Шартлама сивĕ уйăх килме вăхăт çитсен те алама çанталăк тăрать. Кун пекки ĕлĕк те пулнă.

Зимы ждала, ждала природа,
Снег выпал только в январе.

Кун пек хĕл килсен юрать. Çичĕ сехетре çырма тытăнтăм. «2011 çулта çуралакан поэта» сăвă вăрăмланчĕ, сăвă картинчен тухрĕ, шухăшлакан трактат пулса

тăчĕ. Пĕрре ларсан, тепре уткаласан, çăра чей ĕçсен, çынсем ĕçе тухиччен, чăваш: çиччĕ, — тенĕ йăлана пăхăнса, çичĕ куплет çыртăм. Çитет! Тухса çӳрес!

**2.** Апат çиме кайнисĕр пуçне, ниçта та пулмарăм, «2011 çулта çуралакан поэта» çыртăм. Çанталăк сивĕ, урам хура пылчăклă.

**3**. Кунĕпех çыртăм, шухăш тытăнса пычĕ, ĕнер ирчченех ĕçлесе ывăнни сисĕнчĕ.

**5.** Ĕлĕкхи конституци — тĕпрен тĕп саккун тухнă кун. Мана канма саккун çырман пек ĕçлерĕм. Пушкăрт обком секретарĕ ӳкернĕ хамăн сăна илтĕм. Кун килет те каç пулать. Çакă улшăнман йĕркене пăхăнса пурăнатăп.

**6.** Ленăн хĕрачине ачашласа ларсан та, ăна утьăкка туса сиктерсен те, çырма вăхăт тупрăм.

Письма: 1. Бугуруслан — Кузьмину, 2. Москва — Риманову, 3. Эстония — А. Ронд, 4. Шемурша — учащимся, 5. Слакбаш — сестрам, 6. Казань — Федорову, 7. Уфа — Ахунзянову.

Пурне те кĕске çыртăм, Саккăрмĕш — В. Цыбину, поэту, Москва.

**9.** Пĕр сăмах аса килчĕ — çăтмах. Чăваш тĕнĕнче леш тĕнче хăрушă туйăнман: кай та ырă пурăн! «Çăтмах» сăмах ислам тĕнĕнчен кĕнĕ, «тамăк» сăмах та тутар хушшинчен пырса кĕнĕ, çынна хăратнă. Чăваш республикинчи чăвашсен «рай» сăмахĕ вырăсран кĕнĕ.

Егетке — каччă Салават
Ылаcăh да бейĕк аса торчан
Каш батшhы — кыйгыр борхот бар
«Кăйкăр» валли эпиграф
Çăханран çӳл вĕçекен
Пĕлĕт патши кăйкăр пур
Салават

**10.** Эрнекун, чăваш кунĕ, çăмăл кун. Долгов патне кĕрсе тухрăм, типĕ вĕлтĕренпе пултăран илсе килтĕм — Ленăпа ун пĕчĕк хĕрачине çитересшĕн. «2011 çул çуралакан поэта» сăвва, халĕ ĕнтĕ 10-мĕш сыпăка çитнĕ япалана йывăрпа çыртăм, çĕр шухăшсемпе сăмахсем йĕркесене хуçкаланса кĕрсе пычĕç.

Паян эпĕ больницăран тухнăранпа шăп пĕр уйăх пулчĕ, çырма тытăнни те пĕр уйăх. Кулленех эпĕ икĕ япалапа лартăм, иккĕшĕ те «Текерлĕксем» тата «2011 çул çуралакан поэта» поэмăсем пекккисем сарлакаланса тарăнланса кайрĕç, çавăнпа вара пĕрне те çырса пĕтерейменрĕм. 10-мĕшĕнче вуннăмĕш сыпăк.

**11.** Ултă сехетре тăтăм, ĕçлĕ иккĕмĕш уйăха пырса кĕтĕм. 10-мĕшĕнче çĕнĕ уйăх çуралнă, паллă кун. Эпĕ нумай та лайăх çыртăм пулас.

М. Твардовский — бандероль и письмо.

**16.** Лена валли врачсем патне кайма хут татăкки илме çӳренипе, кĕтсе тăнипе вăхăт нумай иртрĕ, шухăшсем сапаланчĕç, тата, ĕçлеме тытăнсан, икĕ хĕрарăм килсе ларчĕç, çавăнпа питĕ сахал çыртăм. Тулта питĕ сивĕ çанталăк тăрать, хула пылчăклă пирки чăн-чăн хĕл ларни сисĕнмест.

**17.** Çичĕ сехетре тăтăм, «2011 çулта çуралакан поэта» сăвва вĕçлейместĕп. Мускава кайма хатĕрленмелле.

Васлей Давыдов-Анатри хăйĕн юбилейне ирттересшĕн чупса çӳрет. Мана çыру ярса панă. Ăна кĕске те кулăшлах çыру çыртăм. Ĕçленĕ ĕнтĕ хăй пĕлнĕ пек, ăна унщăн тавах!

**18.** Хĕл килни сисĕнет, чăлт шурă юр çуса тăрать, урамра сывлăш таса. Ир-ирех тухса çӳренĕ хыççăн ĕç ăнăçлă пырать, такăнмасть.

**19.** Ир-ирех выçă çерçи пек вăрантăм. Килтисене — Андрюша шкула, Ленăна больницăна, Леляна ĕçе кайма вăратса тухрăм, выçварла пирус туртрăм, çыртăм

вара нумай. Чӳречерен пăхсан — ҫанталăк уяр. Уяр сăмах хĕлле кăмăллă, ҫуркунне е ҫулла яланах кирлĕ мар. Пуҫ уяр пулни эрех ĕҫменнине пĕлтерет. Кун пек хытă ĕҫленĕ кун халиччен нумай вăхăт пулманччĕ. Ыран ирхине Мускава вĕҫмелле!

## 1978 ҫ.

### Январь

**22.** Паян ҫĕнĕрен ҫырма тытăнтăм. Мускав патĕнче (Кратово) кут хĕссе ларсах ҫырни пулмарĕ, шухăш ют вырăнта, хыр вăрманĕнче, саланса кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ чăваш хулинче чăвашла ҫырасах пулать. 1959 ҫултах ҫырма тытăннă «Хура кураксене» ҫырсах пĕтерес килет.

**25.** Маруся ҫуралнă кунтанпа 70 ҫул тулчĕ. Ĕнер Союзра асăну каҫĕ пулса иртрĕ. Тухса калакансем В. Долгов, Г. Ефимов, В. Андреева, В. Бурнаевский, Н. Терентьев, Н. Дедушкин.

**27.** Ĕҫ илĕм-тилĕм ирхинех пуҫланса каять те мана ывăнтармасăр пурăнать. «Хура кураксене» ирхине каланă сăмахпа ҫыратăп. Паян Ленăпа иксĕмĕр куҫарса хатĕрленĕ 41 сăвва Мускава яратăп. Письмо и бандероль — Москва, издательство, 2. Фальку ответил. Паян чăвашăн ĕҫлемен эрнекунĕ пулсан та, ĕҫе тиркевĕм ҫук.

### Февраль

**1.** Ку кĕске те сивĕ уйăх манăн ĕҫре вăрăм пулмалла, пĕр канмасăр ир сиксе тăрса куллен ĕҫлемелле! Мĕн пулĕ — курăпăр.

**16.** Кĕҫнерникун, чăваш каларăш, ҫăмăл кун, юнкун хыҫҫăн. Чăваш ĕлĕк юнкун выльăх пуснă, эрнекун ĕҫсĕр-хĕлсĕр куна хатĕрленнĕ. Паян ҫăмăл кун пулмалла пулсан та, кĕрӳ ҫӳп-ҫап витрине тăкса килчĕ те: — ҫумăр! — терĕ, кăмăла йывăрлантарчĕ. Февраль, нарăс уйăхĕ, питĕ сивĕ, чи хаяр кун пулаканччĕ. Темле кăҫал — ҫумăр! «Кураксене каланине» халĕ «Сириус ҫăлтăр айĕнче» ят патăм, О. Туманян сăввине аса илтĕм, чăвашла ку ҫăлтăра чи ҫутă тенине хăвартăм. Ку поэма пек япалана 9-мĕш сыпăкпах паян ҫырса пĕтеретĕп.

**17.** Эрнекун. Яланхи пекех чăвашла ир-ирех ҫерҫи пек тăтăм та ҫырма тытăнтăм. Кăнтăрла Советсен ҫуртне кайрăм, апат-ҫимĕҫ илесшĕнччĕ. Ĕмĕтленни тухмарĕ — аристократсем тавраш пырса тухни халĕ йăнăш пулчĕ. Знай свой шесток! — ҫерҫи пулсан, ăмăрткайăк пек шутлакан ҫынсен (тĕрĕссипе ҫынмарсен) вырăнне ан пыр!

Ҫынмарсем ертсе пынипе, чăваш литератури те пăчланса ларчĕ.

Эх, пурнăҫ, пурнăҫ!
Миҫе кăна пăрăнăҫ!
Хăшне алăк хăлăпĕ,
Хăшне тилĕ тăлăпĕ.

Паян алăк хăлăпне тытса пăхрăм. Питĕ тĕрĕс каланă иккен Шелепи старик.

**19.** Вырсарникун. Эпĕ, чăваш пулсан та, ку кун ĕҫлекелерĕм, «Сириус» икĕ сыпăкне якатрăм, хаҫат валли хатĕрлерĕм. Пĕр ҫыру та, питĕ кирлисем те килмерĕҫ, ĕҫсене тăлласа тăраҫҫĕ. В. Исаев фотограф, Пăслăк ачи, килсе ларчĕ, тăрăшать, ҫар кунне стенд кăларса урама ҫакасшăн.

«Сириус ҫăлтăра» каллех ярса илтĕм, вуннăмĕш сыпăк ҫыратăп. Ытла вакланса каймарăм-ши? Ҫап-ҫамрăк чух кĕскен ҫыраттăм, шухăш та кун пек саланса каймастчĕ, тӳпери тĕнчене ҫĕкленсе каймастчĕ, алăра автан тукмакĕ пулни ҫитетчĕ. Ҫынсем столовăйне ĕҫлеме кĕреҫҫĕ, министра ларма кĕреҫҫĕ. Вĕсене Сириус ҫăлтăр кирлĕ мар, алăра пысăк кашăк пултăр, юнашар тăр-тăр купарчаллă арăм вырттăр! Виҫĕмкун ҫумăрччĕ, кĕрччĕ, паян — асар-писер тăман хулара та ӳхĕрет. Тĕлĕнте-

рет кăçалхи нарăс уйăхĕ — февраль. Кăçал капла, килес çул мĕнле пулĕ-ши?

Пĕр шухăш пуçа килсе кĕчĕ. Ĕлĕк чăвашсем, пирĕн патрисем те, ял ятне чăвашла панă: Хурамал — хурама йывăçран, Çирĕклĕ — çирĕк йывăçран. Хальхисем — Сосновка, Вишневка, Соловьевка, Ермелкино. Куславкка районĕнче карăк тăрса юлман пулсан та — Карăк касси ял пур. Чăваш пур çĕрте те хăйĕнчен писет. Колхозсем «Пучах» ятлисем те пурччĕ, халĕ Чăваш республикинче пĕр чăвашла ятлă колхоз та çук. Çын ячĕсем Курак, Юман т. ыт. пурччĕ. Халĕ юрисем анчах.

**20.** Письма: — Москва В. Огневу, Уфа — Суфияну Сафуанову /просьба прислать книгу и Башкирской эпос/ (ответил и прислал книгу 23.3.78)

Редакцие икĕ сăвă кайса патăм, чипер çынсемпе калаçрăм, савăнсах, советсен çуртĕнчи столовăйĕнчен 10 пĕчĕк кукăль илсе килтĕм.

**21.** Пилĕк сехетре Жюль Верн пек сиксе тăтăм, Толстой пек çĕре аса илтĕм, Егор Исаева, çĕр поэтне, çыртăм. Ун «Даль памяти» поэми Мускавра тухнă.

**22.** «Сириус çăлтăр айĕнче» поэмăна пĕр уйăх каярах çырма тытăннăччĕ, вунпĕр сыпăк çырса пĕтертĕм, вĕçне çитме тата икĕ сыпăк тăрса юлчĕ. Сюжетсăр япала йывăр, шухăшсем çеç, детальсем те, çынсем те çук — шăнăрсăр. Каллех ирхине тăрса лартăм. Çăлтăрсене пăхса лариччен, çĕр çинче ларни лайăх.

**24.** Тăвата сехетре тăтăм. Ĕнер аслă уяв, салтак уявĕ пулсан та, ниçта та каймарăм. Шупашкар маншăн вăрçă вăхăтĕнче та ырă пулмарĕ, Шупашкарта эпĕ, 1943 çулта çулла килсе тухсан, вăрçа ăслисем кайман, ăслисем тылра юлнă, тенине илтрĕм. Шупашкар маншăн яланах элек йăви пулса тăчĕ. Унта эпĕ «халăх тăшманĕ» ят та илтĕм.

**28.** Уйăх юлашки кунĕ питĕ ир пуçланчĕ. Виçĕ сехетрех вăранса кайрăм та, урăх ыйăх килмерĕ. Выртса та пăхрăм — ĕç тухмарĕ, тăмаллах пулчĕ. «Сириус çăлтăр айĕнче» поэмăн юлашки сыпăкне пĕтерес терĕм.

Паян «Сириус айĕнче» ятлă япалана çырса пĕтертĕм. Пĕтĕмпе 16 сыпăк. Тататкĕсĕксем, шухăшсем. Нарăс уйăхĕ иртсе кайрĕ. Нар — перс чĕлхинче хĕвел. Нарспи — хĕвел хĕрĕ. Пуш уйăх ыран пуçланать. Хĕр çураçса хумалли уйăх.

## Пуш уйăх — март

**1.** Ку уйăха пушă хăварас килмест. «Современник» издательство валли хамăн пурнăçăмпа ĕçĕм-хĕлĕм çинчен япала çырса пĕтерес тетĕп. Ун ячĕ ĕлĕкхи — «Земля и поэзия». ...

**2.** Вырăсла «Земля и поэзия» çыратăп, малтанах таçта масар çине кайса тухрăм, каялла килейместĕп.

**7.** Эпĕ хам çинчен те, çынсем çинчен те ним те калама пултараймастăп, çиччĕмĕш кун ĕнтĕ «Земля и поэзия» кĕнеке çыратăп. Ку уйăх тулли пулать, нумай çывăрма памасть.

**10.** Ĕнер кĕрӳпе Ленăна Мускава ăсатса ятăм. Юр лăпкă-лăпкă, шултра çăватчĕ. Ĕнерех Емельяновпа нумай калаçса лартăм, сахал çыркаларăм. Вăхăт питĕ хăвăрт иртсе пырать. Ăна пăртакçă тытса чарасчĕ, ватăличчен ĕçлесе юласчĕ! Пĕр çыру та килмест. Аптăрав!

**12.** Ĕнер каçхине В. И. сыпса килнĕччĕ те пĕтĕм ĕçе чарса лартрĕ, калаçса чуна кăларчĕ. Ачи ĕçчен, сыпсан — чаракĕ çук. Сарпи текен сăвăçă пур. Вăл унăн портретне урама тухса çакнă иккен, вырăнти çынсем кăларса пăрахтарнă иккен. Тарăхать И. Темле япала та пур пирĕн аслă Шупашкарта! Пострисем пĕр хĕрарăмпа çапăçма тытăннă. Çын кăмăлне хуçма кирлĕ марччĕ. Паян вырсарникун, ĕçлесех килмест. «Земля и поэзия» тарăнланса кайрĕ те пырса кĕнĕ вырăнтан тухаймасть.

**13.** Тӑватӑ сехетре тӑтӑм, «Земля и поэзия» кӗнеке ҫаплах пырать. Хӗвел хытӑ пӑхать, ҫур ҫинчен пӗлтерет. Ҫур сӑмах чӗлхерен персе ӳкнӗ, ҫуркунне сӑмах тӗрӗс мар кӗнӗ те тӑрса юлнӑ. «Ҫу» сӑмах та ҫаплах. Малалла мӗн пулӗ-ши?

**30.** Миҫе хут ӗнтӗ инкеке пырса лекетӗп! Тарӑн шухӑшланӑ пек пулса ҫырса лартӑм та, каялла пӗлместӗп. Вӑтӑр талӑк тухма «Земля и поэзия» кӗнекепе аппаланатӑп, литература пирки супӗлтетсе вӑя пӗтертӗм. Пурне те ҫырнине ҫурса анчах тӑкмалла! Малтан кирлӗ пек туйӑнчӗ. ... Чун ыратать, хама пӗтӗмпе чирленӗ пек туятӑп. Паян ирех, виҫӗ сехетрех тӑрса лартӑм, каллех пӑтранса ҫыратӑп.

## Ака уйӑхӗ — апрель

**8.** Ӗнер шухӑшласа та, ҫӳресе те ывӑнтӑм, ҫывӑрма ир выртрӑм та паян илӗмтилӗм ирех вӑрантӑм, пӗр сехетрех ӗҫлеме тытӑнтӑм, питӗ харсӑр пулнӑран ҫичӗ сехетре ывӑнса ҫитрӗм. «Русский дух» пирки нумай ҫыртӑм, вӗҫне ҫитерейменӗм, тутарсем ҫав «духа» юратманни патне пырса ҫитрӗм, чарӑнтӑм. Ӗнер килтен ҫыру илтӗм. Слакпуҫ геройӗ Николай Иванов ҫакӑнса вилнӗ, хӑй виличчен арӑмне пуртӑпа ҫамкинчен ҫапса вӗлернӗ. Тем те пур ҫут тӗнчере...

**12.** Кӗнеки чарӑнса ларчӗ, чун ывӑннӑ, алӑ ӗҫ патне туртӑнмасть. Кун ҫӳресе ахалех иртсе кайрӗ, редакцие кӗрсе тухрӑм, калаҫрӑм, тӗрӗссипе ӗҫ ҫукран палкашрӑм.

**14.** Тӑватӑ сехетре тӑтӑм, «Земля и поэзия» кӗнеке канӑҫ памасть, ун варринче пӑтрашса ывӑнсах ҫитрӗм. К. Иванов кӗнекине вырӑсла Мускав валли хатӗрлемелле. Вӑхӑт та ҫук, пуҫ та ӗлӗкхи мар, хӑвӑрт ывӑнать. Эх, яла каясчӗ те!..

Пӗр кун та ӗҫсӗр мар пулин те ӗҫ тӑрӑ мар, пӑтранчӑк. Чӑваш литературин историйӗ те пӑтранса, пӑтранса пынӑ, ҫавӑнпа ӳсеймен, чӑваш чӗлхине сума сумасӑр, тӗрӗс мар вырӑсла ӑнланса пынӑ. Чӑваш чунне тиркесе пырсан, чӑваш тӗрӗс вырӑс пулаймасть.

**23.** Пурнӑҫ хамӑн та, таврари те кутӑн-пуҫӑн пырать. Вырӑсла кӗнеке чӑвашла шухӑшланӑ пирки аташса кайрӗ. Ҫанталӑк та аташнӑ, йывӑҫсем ҫеҫке ҫурас, кайӑксем юрлас чухне йӗпе юр ҫӑвать. Кун пек ҫанталӑкра эпӗ кута хӗстерсе ларсах ҫырма юрататтӑм, халӗ кӑмӑл урӑхла, екки ямасть. Нихҫан та эпӗ чап пирки шухӑшламан, мӗн пуҫа килнине ҫырса панӑ, ҫынсене ӑс вӗрентмен. Халӗ ҫынсем кукӑр-макӑр ӑспа тӳрлетесшӗн те — тарӑхатӑп ҫеҫ. Эпӗ малтине курасшӑн, ҫынсем — укҫа та апат, пуйма анчах хӑйсене вӑхӑтлӑх чап. Пӗр вунӑ ҫул ӗнтӗ тӑлланатӑп, нимех те чипер ҫырни ҫук. Пурте вӑрӑм, хитри , кӗски ҫук.

## 1979 ҫ.

## Ака уйӑхӗ — апрель

**3.** Ҫырма сӗтел хушшине лармассерен эпӗ ача чухнехи вӑхӑта таврӑнатӑп, ун чухне епле калаҫнине, вырӑсла пӗлмесӗр пуплевсене йӗркеленине аса илме тӑрӑшатӑп, сӑмахсем сахал пирки тарӑхатӑп. Эпӗ ача чухне ҫеҫ чӑн-чӑн поэт пулнӑ иккен, никамран ӑс ыйтман, халӑх кулленех ӑс панипе сисмесӗрех ӑслӑ пуранӑ. Халӗ чӗлхе пирки пӑтрашса кайнӑ чӑваш халӑхӗ хушшинчен чӑн-чӑн чӑваш поэчӗ тухма пултараймасть, тухсан та, хӑйӗн халӑхне тиркенисем анчах тухӗҫ, сурпанпа киремет ҫинчен пӗли-пӗлми суйса ҫырӗҫ,укҫа шаккӗҫ. Шупашкарта И-сем тиллит-тиллит микулайла мухтанса ҫӳрӗҫ, вӗсене обкомрисем хисеплӗ ятсем парӗҫ, хӑйсене чӑваш тени йӗрӗнчӗк туйӑнӗ, карьера ҫулӗ ҫинче анчах кирлӗ пулӗ, така какайӗ те пулӑ вӑлчи ҫитерӗ.

**9.** Начал писать автобиографию для журнала «Волга»; споткнулся, отложил, скучно. Письма: Татария — музей Ш. Мудариса, Ульяновск — Н. Благову, Киев

— Слитчуку, переводчику поэмы «Дед Кельбук». Письма праздные, неделовые, просто из-за вежливости.

**12.** Космос кунĕ. Радио паракан сăвăсене итлерĕм. Гагарин — Гжатск хулинче çуралнă, Николаев — Шуршăлта. Çĕр çыннисен ачисем. Николаев питĕ чирлĕ текен хыпар нумайранпа пăшăрхантарать. Халĕ чăвашсенчен паллисем иккĕн — Андриянпа Надежда. Чăваш чĕлхи пĕтĕм тĕнчере янраймарĕ. Пысăк вырăнта ларакан чăвашсем хăйсем чăваш пулнăран тарăхаççĕ, хăйсем епле йывăç турачĕсем çинче ларнине пĕлесшĕн мар. Крылов юптаруне чăвашла куçармаллатăр «Свинья под дубом». Манăн шухăш ĕлĕкхи пек вĕçмест, пуç мими шанмасть, утнă чух ура тăлланать. Ухмах пек туятăп хама. Çырма ларатăп — вĕçме шухăшăн çуначĕ çук. Ĕлĕк пурччĕ, чăваш чĕлхин малашлăхĕ çунат усăнчĕ.

**15.** Уйăхăн çурри иртсе кайрĕ, кăштăр-кăштăр çыркаланипе ĕлĕкхи «Левентейпе ун лаши» поэма кĕçенсех сикмерĕ, ĕлĕкхи вырăнтах тăчĕ.

**18.** Кулăшла çанталăк. Ĕнер сивĕччĕ, йĕпе юр çăватчĕ. Паян чӳречерен пăхсан, урам çĕтĕк, ула-чăла, хура вырăнсем юрлă вырăнсемпе хутăш. Ĕçлесех килменипе çырасси хуллен, кирлĕ-кирлĕ мар пек пырать.

Ĕнер писательсен правленинче пултăм. Ĕç çукран хырăма ĕçлеттерме чей ĕçеççĕ, чăвашла укçа илеççĕ, вырăсла çыраççĕ.

Паян шыв-шурлă çурхи кун, К. Иванова асăнса сăвă çыртăм, ăна поэмăна кĕртсе хăвартăм, макăрас килчĕ. Ăна чăваш чиновникĕсем, халăхран пăрăнса хăйсен дачинче кӳпичченех çиекен чăваш дворянĕсем йĕркеллĕ хисеплесе аса илмеççĕ, 90 çул тултарас вăхăта та халăх асĕнчен сиктерсе хăварасшăн. Эпĕ вилсе выртсан та, манăн йĕр чăваш çĕрĕнче тăрса юлмĕ.

**21.** Пĕр хыпар — Шупашкарта тăватă градус сивĕ. Ĕлĕк, эпĕ астăвасса, ку вăхăтра çерем çинче çара уран транки-транк сикнĕччĕ. Мĕн пулчĕ-ши? Хăçан çурхи акана тухмалла, пĕлтĕр туман çĕртмене епле тумалла?

Паян аслă мункун. Çапла вара уяв пĕр эрне тăсăлмалла. Ун чухне ачасем йăва пуçтарма килтен киле çӳретчĕç. Йăва тума тулă çăнăхĕ кирлĕччĕ. Вăл чăвашăн ĕлĕк çукчĕ. Халĕ ыраш çук. Ыраш çăкăрне Мускавра çеç çиме пулать, теççĕ.

**24.** Ашмарин, III томĕ.

Ашмарин словарĕнче Шĕнерпуç легенди пур. Киремет турă ывăлĕ, тет, çĕр çинчен пĕлĕте тарнă, тет. Ку легенда, ман шутпа, Хусан ханĕсем чăваша хĕстернĕ чух çуралнă. Трагеди çырма пулать. Киремет хăйĕн тусĕсемпе тарма йĕпкĕн хура урхамахсене кӳлсе тăратнă. Хитре!

Эх, яла кайса тухасчĕ те шухăша кайса уй çулĕпе утасчĕ, вăрмана кĕрсе тунката çинче канасчĕ!

**26**. Январьте çумăр çуса тĕлĕнтернĕччĕ, халĕ çумăр çăвать те тĕлĕнмеллех мар, анчах çанталăк кĕркуннехи пек усал, сулхăн.

**29.** Ырантан тепĕр кун — уяв. Ман уявлама пĕр çитĕнӳ те çук, ӳпкелеме те кирлĕ мар — йĕри-тавра чăваш халăхне сума суман çынсем пысăк вырăнта. Вĕсем пӳпе пĕчĕк мар, анчах ăсăпе вара кăмакара тăваттăн авăн çапакансем пек. Манăн 1932 çулах Мускавра Пирогов больницинче шухăшланă поэма пур — «Хĕлле тĕлĕкре курнă тĕлĕк». Çавна çырмаллаччĕ!

«Советская Чувашия» хаçатра А. Емельянов статйине вуларăм — райком секретарĕ шухăшĕпе пурăнать. Кивĕ капанĕнче чунпа шухăшлани çук — йăлăхтарса çитернĕ рационализм! Уяв саламĕсем сĕтел çинче тулли, ĕç пирки никам та çырмасть. Питĕ нумай хут ахалех пĕтет. Атăл пăрĕ хускалнă. Çирĕм сакăр кун каярах килнĕ çур.

**30.** Уйăх иртсе кайрĕ, кулленех тенĕ пек çырсан та поэмăна çырса пĕтерей-

мерӗм. Вӑй та, чун та, туйӑм те ӗлӗкхи мар. Ҫырусем нумай ҫыртӑм. Чӗнекен пулмарӗ. «Позабыт, позаброшен» тенӗ пек пулса тухрӗ. Ку юрра эпӗ пӗчӗк чух Глуховская станцире илтнӗччӗ. Сӑмахӗсем, хам вырӑсла пӗлнӗ-пӗлмен пулсан та, асра юлнӑччӗ. Юлашкинчен юрӑ «Соловей запоет» тенипе, нӳр ҫӗре асӑннипе пӗтетчӗ. Ҫӗтӗк-ҫатӑк тӑлӑх ачасем кӑвапине кашӑкпа ҫапа-ҫапа юрласа панӑччӗ. Манӑн хамӑн та нӳр ҫӗре кӗме нумай юлмарӗ.

## Ҫу уйӑхӗ — май

**1.** Чӑн-чӑн ҫурхи ир. Ҫутӑ, ӑшӑ. Пилӗк сехетре тӑтӑм. Чӳречерен пӑхсан — ҫын питӗ сайра иртсе ҫӳрет, кахал, лӳппер, мӑран, хантар ыйӑхлӑ. Демонстрацире хӑйӗнче пулмарӑм, трибуна тавраш ӗнче уткаласа ҫӳрерӗм, «Советская Россия» корреспонденчӗ Виктор Овчаровпа калаҫкаларӑм, ун патӗнче «Чувашия» хӑна килӗнче пултӑм, унпа апат буфетра ҫирӗм. Кун ҫапла пӗр сисӗнмесӗр иртсе кайрӗ, ҫӗрле анчах пӗтӗмпе тӑватӑ йӗрке ҫыртӑм.

**2.** Ҫиччӗре тӑтӑм. Рсай тахҫан ӗлӗк ҫырнӑ пек: О хӗвел! — терӗм, хырӑм пӗрӗнсе ҫитсен, пыршӑ-аршӑ калаҫнине илтрӗм те буфета кайса ҫикелерӗм, ҫырма тытӑнтӑм. Шупашкарта никам патне кайма аптӑрав. Тата виҫӗ талӑкран Иванов ҫуралнӑ кунӗ. Ун ҫинчен ҫыратӑп.

Овчаров Виктор, корреспондент, пырса ларчӗ, унпа калаҫса вӑхӑт иртрӗ.

**3.** Задумался рано утром как-то случайно о Пастернаке. Писал в суровое время РАППа о косности своей грудной клетки. Пятилетка и грудная клетка — имел все же мужество открыто высказаться. Пирӗн патра ӑна И. Кузнецов пӗр самантрах пӗтерӗччӗ, тытса хупӗччӗ. Вырӑссен Луначарский пек те ҫынсем пулнӑ ҫав, литературӑна Ленин халалӗ пек тытса пынӑ, чунне те ҫырма ирӗк панӑ, шикпе шикленмен. Кузнецов пеккисем чӑвашра ҫеҫ пулма пултарнӑ. Ҫырасси юхсах пымарӗ, такӑнчӗ. 36 йӗрке. Вӗсем те якалсах ҫитмен. Ҫырасси чӑваш буржуазийӗ пирки пычӗ. Нигилизм, хыткукар, ӑҫтиҫук. Р. И. Майкова телефонпа калаҫрӗ, пулӑшма ыйтрӗ. Пысӑк вырӑнти ҫынсене чӗрӗлме пулӑшать, хӑйне пулӑшакан ҫук. Паян ҫӗре тӑрса юлтӑм, кирлӗ вӑхӑтра ҫывӑрма выртаймарӑм. Шухӑшсем пӑтрашса каяҫҫӗ, кӗвве тикӗс кӗмеҫҫӗ.

**8.** ...Ӗпхӳрен Муромский чӑвашран питӗ кӑмӑллӑ ҫыру илтӗм. Лайӑх ҫынсем питӗ сайра курӑнакан вӑхӑтра юрӑ ҫынсем те тупӑнкалаҫҫӗ.

**9.** Салтак уявне салтакран пӑрӑнса юлнӑ ҫынсем ҫӑвар карса ирттернӗ чух эпӗ тухса ҫӳремерӗм, В. Овчаров патӗнче ҫеҫ пултӑм. Кун уяр, пӗлтӗрхи пек мар, кӑҫал ӑшӑ.

**10.** Ирхи ӑс чӑвашла шухӑшласан, А. Воробьевӑн «Кӑнтӑрла» кӗнекине пӑхкаларӑм. Вӑл чиперех шухӑшлӑ поэт пулма пултарнӑ, чӗлхине ваткаласа ҫырнӑ. Чиперех шухӑша каласа пама чипер чӗлхе, вырӑсла ватман чӑваш чӗлхи кирлӗ...

**11.** Иртнӗ ҫӗр «Поэзия 1979» кӗнекере Твардовскийӗн «Страна Муравия» валли ҫырнӑ хатӗрлев сыпӑкӗсене вуларӑм. Вӗсене 34—35 ҫулсенче ҫырнӑ чух эпӗ «Тимӗр карта» поэма ҫырма тытӑннӑччӗ. 1936 ҫул Уфара ҫырса пӗтернӗччӗ. Кайран вӑрҫӑ хыҫҫӑн манӑн пӗчӗк пӑрахутпа Карача кайма тиврӗ. Криушире пӑрахут ҫыран хӗрринех пырса лараймарӗ. Кимме кӗрсе ларсан, хӗрарӑмсем шӑри-шари ҫухӑрма тытӑнчӗҫ. Кимӗ ӳпне ҫаврӑнас чухне эпӗ сиксе антӑм — «Тимӗр карта» та, пӗр хутаҫ ҫӑнӑх та шыва кайрӗ. Ужгородра вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр лайӑх йывӑҫ ручка илнӗччӗ. Вӑл ҫырма питӗ те майлӑччӗ. Вӑл та шыва кайрӗ. Ҫӑнӑхӗ пельмен, чӑвашла хуран кукли пӗҫерме кирлӗччӗ. Эпӗ питӗ тарӑхрӑм, мансах каясран «Тимӗр картана» ҫӗнӗрен ҫырма тытӑнтӑм, кайран ятне темиҫе хут улӑштарса пытӑм — юлашкинчен «Ҫул» ят патӑм.

14. Шупашкарта пĕр хыпар та, инçетрен пĕр çыру та çук. «Сĕм тĕттĕмри чăн мерчен» ят патăм, ăслă пек туйăнать, çапах та вăрăмланать, кĕскен çыраймастăп, аса килсе тăнисене пурне те каласа хăварасах килет. Ручкăсенчи чернилсем типсе пыраççĕ. Çавăнпа пусса çырма тивет.

15. Кун çиленнĕ пек сивĕ тăрать. «Сĕм тĕттĕмри мерчене» çĕнĕрен çырмарăм, унччен çырнисене якаткаларăм, малалла кайма пӳлĕнтĕм, сыпăкпа сыпăк çыхланмасть, таçталла тапса сикмелле. Ĕлĕк капла тăлланнă чух ялта уй-хире тухса çӳреттĕм, Илпер çыранĕ хĕрринче йытăпа шухăша кайса лараттăм, сюжетра тăлланнă вырăна сӳтме пĕлеттĕм. Мана ял, халăх, сывлăш, карта юпи çинче ларакан çерçи те кирлĕ. Сĕтел мар, чĕрĕ çутçанталăк ман чуна хускатать. Хаçатра вуламаллиех çук, çырусем те килмеççĕ. «Позабыт, позаброшен» юрри пек пурăнатăп. Кама кирлĕ-ши эпĕ?

18. Тăвата сехетре вăрантăм, 12 сехет çывăрнă. В. Овчаровпа пĕрле икĕ кун «Победа» колхозра пултăм, ĕçлекенсене курса, вĕсемпе калаçса савăнтăм, çырасах шухăш килмерĕ, алла ручка тытса пăхмарăм. Çывăрнă чухне çĕрле, çур аки туса пĕтернĕ хыççăн çумăр çуса иртнĕ, аслати те авăтнă — эпĕ сисмен.

19. Хĕвел хăй чӳречерен кĕрес пекех пăхать, çамкана перĕнет. Шăматкун. Получил письмо и книги от новгородского писателя А. Ежова, ответил пространно, вдохновенно.

20. Вырсарникун. Хĕвел хĕрлĕ мар, хăйăрпа якатнă пек çап-çутă тухрĕ — ку шăрăх пуласса. Тухса çӳрекелерĕм. Ир-ирех тăракансем курăнмарĕç: хăшĕсем хăйсен пахчисене кайнă, нумайăш — тутлă ыйăхра. Ваттисем ирех хăйсене тутă пулма магазинсен умĕнче тăратрĕç. Питĕ те кичем пурнăç, çырас килмест, екки каймасть. ...Каçхине аслатиллĕ çумăр кĕрлесе килчĕ те Атăл тăрăх анса кайрĕ, нумаях çумарĕ.

21. Пиллĕкмĕш сехетре тăтăм, нӳрлĕ ир, калчасене аталанмалли хитре çанталăк. Манпа пĕрле кушак та тăнăччĕ, чӳрече умне пырса ларчĕ, тяпписене çуласа çăвать. Чăвашăн мар, Сиам кушак аçи. Эпĕ хам Кутемер пуянĕсем кушак аçи тирне сӳсе пуйнă пирки çыратăп.

22. Манăн Кутемер пирки тĕплĕрех пĕлмелле пулнăччĕ, çавăнпа П. Н. Осиповпа телефонпа калаçрăм. Ку ялта чиркӳ пулман иккен, пуянсем Баймаковсем пулнă. Ку япала мана çырма кăштах кансĕрлет. Слакпуçĕнчен çыру илтĕм. Чиперех пурăнаççĕ.

Çанталăк сивĕтсе ячĕ. Пĕлтĕр те çаплаччĕ.

Космонавт пиччĕш Иван каçхине килсе ларчĕ, кутани кăштах хĕрнĕччĕ. Чипер çын. Ун ачисем эпĕ унпа паллашнă чух сĕтел айĕнче ларатчĕç. Пĕри авланнă, тет. Вăхăт иртет, хурлантарать.

25. Улттăран вуниккĕчен çыртăм, малалла шăхăш кайсах каймарĕ, такăнчĕ. Ултă сехет сахал, ялта ытларах та лайăхрах çыраттăм. Хула манăн йăва мар. Шăпчăк та юрламасть унта.

27. Письма: Москва — Лене, Туркину, Ошанину, Кишинев — Бродскому. Тăвата çыру çыртăм, «май» тенĕ конвертсене пĕтертĕм. Хама çыракансем çук. Паян «Советская Чувашия» манăн сăвăсене кăларнă. Вулама та, пăхма та илемсĕр.

28. Виçĕ сехетре тăтăм. Ку вăхăтра çерçи те вăранмасть. Усси пур-и? — çырма тытăнтăм. «Правдăра» Капиев пирки статья тухнă, пур халăха та Дагестанри пек вырăслатса пымалла тет. Мĕн тейĕн, самана çапла ĕнтĕ. Çавăнпа пирĕн чăвашла тĕп-тĕрĕс çыракансем çук, укçа та чап туянма васкаççĕ, ăсталăх пирки шухăш çук. Чĕлхе илемĕ мар, чĕлхе усси анчах кирлĕ.

Чылай вăхăт аслати авăтса тăчĕ-тăчĕ те чăвашсене те манас темерĕ, вĕтĕ тумламлă çумăр илсе килчĕ. Тен, шултра тумламлă-тăр, тухса курмарăм, чӳречерен

çеç пăхса лартăм. Ача чухне çара уран siksе тухаканччĕ. Вăхăт иртсе кайнă, выçă вăхăта та савăнсах аса илесси анчах тăрса юлнă.

Çумăр хăвăрт иртсе кайрĕ, ун тумламĕсене хĕрлĕ тутипе çуласа хĕвел тухрĕ. Çут тĕнче хăйĕн пек пурăнать, унта ыррипе пĕрле усалĕ те пур. Паян виççĕрен çичĕ сехетчен (кăнтăрла пĕр сехет çывăртăм) çыртăм, питĕ йывăррăн пычĕç йĕркесем — Ивановпа Тайăр Тимккине илемлĕ кăтартас терĕм, вĕсене политика тĕнчине çавăтса кĕтĕм. Хама пырать пек, вулама — кичем, поэзи янравĕ çук. Мĕскĕн те типĕ йĕркесем. Кĕрӳ наука конференцийĕ ыран пулать, тет. Кедровпа Юдин академиксем килнĕ, тет.

**29.** Ĕнерех шухăшласа хунă сакăр йĕркепе аташса лартăм, чăваш чĕлхинче рифмăсем сахал, юрăсенче вăл сайра, аллитерацисем çеç пур. Чăвашла пĕлмен Çеçпĕл Мишши хыççăн... аташса çыратпăр, хамăр чĕлхене тоника виçине хĕстерсе кĕртетпĕр, йăвалатпăр, пăсатпăр. Ку сиенлĕ япала йăлана кĕрсе тăнă, чăваш поэзине тăллант. Шупуççынни талантлă пулсан та çĕнĕлле çырма хăтланчĕ, пĕтĕмпех пăчланса ларчĕ.

**31.** Кĕçнерникун çăмăл тесен те, пуç ирех ĕçлемерĕ, ĕнер Л. Леонов 80 çул тултарнине кăтартнине пăхса ларнипе çывăрма кая юлса выртрăм, выртсан та хăвăрт ыйха каяймарăм, вуларăм. Ĕнерхи мухмăр пек пулса тухрĕ. Леонид Максимович мана семинарта вĕрентнĕччĕ, мĕн вĕрентнине аса илеймерĕм. Ун чухне эпĕ аслă прозăна ăнланса çитмен, çăмăлттай пулнă. Поэт сăвă çырнă чух поэзи мар, проза вуламалла.

**Июнь — çĕртме е хĕр уйăхĕ**

**1.** Хĕвел каçăхса кайсах чӳречерен пăхать. Тăваттăра тăтăм. Тайăр Тимкки çинчен калакан сыпăксемпе ларатăп. Утса çӳресе шухăшласан, лайăхрах пулатчĕ, йĕрке хыççăн йĕрке хăй килсе тăратчĕ. Ларатăп — инкек! Екки ярсах ĕçлерĕм, ĕлĕкхи пекех нумай та хамăн кăмăла каймалли юмахла çыртăм. Мана иртсе кайнă пурăнăç усалли те, ырри те юмах пек ӳсĕнсе курăнать. Усалли ытла усал, ырри ытла ырă.

Над вымыслом слезами обольюсь. Питĕ тĕрĕс каланă Пушкин. Çапла шухăшласан çеç пурăнăç илемлĕ те хăрушă та.

**11.** Тăваттăра хĕвелччен вăрантăм, çывăрмаллаччĕ, ыйхă килмест. Поэмăна вĕçне çитерейменрĕм, вăрăмлатрăм. Ку инкекрен хăтăлаймастăп-тăр. Вунпĕр сехетре Ĕпхĕве вĕçсе каятăп, çуралнă çĕршыва курас та, курмас та килет. Ĕлĕк Слакпуç хăй те чаплăччĕ, чаплă та илтĕнетчĕ. Чăваш чĕлхине кунта хĕсни çитмест, Пушкăртра тутарсем хĕсеççĕ, сывлама памаççĕ. Колхоз председателĕ те тутар, райкомра та тутар.

**Октябрь — юпа уйăхĕ**

**18.** Тĕлĕнтерет çанталăк. Çĕр кăчăрт-кăчăрт шăнма вăхăт çитнĕ, иртсе те кайнă вăхăтра çумăр çуса иртет. Эпĕ тахçанах «Сĕм тĕттĕмри мерчен» ятлă япала çырма тытăннăччĕ, ăна пăрахнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ ир-ирех тăратăп та кивĕ япалана çырма тытăнатăп. Сиам кушакки пулă çиет, эпĕ поэма çыратăп, çырусем килсе парасса кĕтетĕп. Пĕр хыпар-хăнарсăр пурăнма кичем. Эпĕ пĕр вăхăтра ылмашăнса виçĕ ĕç тăватăп, çыратăп, Шухов «Ненависть» романне, Емельянов тин çеç вырăсла куçарнă «Год — тринадцать месяцев» повеçе вулатăп.

**20.** Ĕнер Алентей юбилейĕ пулса иртрĕ, вăл тĕлĕнтерчĕ те çиллентерчĕ. Правлени председателĕ А. Емельянов, чăваш чĕлхи вилсе кайнă пек, вăл юрăхсăра тухнă пек, вырăсла калаçрĕ, ыттисем те ăна пăхăнса вырăсла перкелерĕç, юлашкинчен Алентей хăй те вырăсла çырнине вуласа пачĕ. Чăваш чĕлхи политикăран тухса ӳкнĕ пулсан мĕншĕн вара чăвашла çыракана хисеплесе юбилей ирттермелле? Мăшкăл!

Халăх хăй писательне курма, чунне йăпатма пысăк зала килсе тухнине сума сумасан, тăван чĕлхене тиркесен, кăмл хуçăлать, çырас килмест. Пире идеологи енчен вĕрентсе пыракансем наци политикине лач сурса иртĕхсен, тата тепĕр уйăхран Çеçпĕл юбилейне ирттермелле е унăн памятникне хума пĕлтерсе лартнă чул юпана çурса сирпĕтмелле-и? Кун пек ирсĕрленсе хăтланнă хыççăн чăваш ачи, Çеçпĕл чĕннĕ пек, чăваш литературине килет-и?-çук, килмест, урăх кирлĕ ĕçе каять, çырма мар, чăвашла калаçма та пăрахать, хăйĕн халăхĕнчен сивĕнет.

**22.** Çыркалатăп «Сĕм тĕттĕмри мерчен» поэма, вулатăп — А. Емельяновăн «Çул — вунвиçĕ уйăх» повеçне. Ку япала малтан килĕшсех каймарĕ, икĕ сыпăкĕ — пуçламăшĕ — начар, лерелле чиперленсе каять. Ю. Галкин васкаса куçарнă. Пурнăçра савăнни çук, тарăхни те çук, кичем. Ĕлĕкхи пек уй-хире тухасчĕ, шухăша каясчĕ. Хулара пĕр çĕнĕ шухăш та пуçа кĕмест, пурнăç сисĕнмесĕр иртет.

**23.** Тĕпчев институтĕнче доклад итлерĕм. Мускавран, Хусантан Ĕпхӳрен, Йошкар-Оларан килнĕ çынсен доклачĕсем, Мускавран килнĕ докторсем çиелтен, пĕтĕмпе пĕрлештерсе калаçрĕç, вуласа пачĕç. Е. Владимировпа В. Канюков чиперех, тарăнран тĕпченĕ пек вуласа пачĕç. Вĕсене шанса итлес пулсан, пурне те И. Яковлев анчах туса хунă. Чăнах та вăл Улăп, анчах Ивановпа ун тавра ӳснĕ паттăр çынсем Яковлева килĕшсех кайман, ăна пăхăнсах пыман. Чăваш литератури çинчен вырăсла çеç калаçни те, вырăсла çеç вулани те килĕшсех каймарĕ мана. Чăваш чĕлхин хăй çинчен калаттарма вăйĕ пур. Эпир килте кухньăра та пысăк залра та вырăсла пĕлкелшетпĕр, политикăра чăвашла калаçма пĕлместпĕр. Итлесе ывăнтăм та, кăнтăрла института каймарăм, çывăртăм. Тĕлĕкре чăвашла шухăшларăм. Ку уйăхра 19-мĕшĕнче Алентей юбилейне вырăсла ирттернĕччĕ. Ĕлĕкхи Алентейччĕ, халĕ ĕнтĕ Алендей. Чăвашла таранд пулса тăни тарăхтарать.

**30.** Уйăх иртсе кайрĕ, ĕçре те, пурнăçра та палăрсах юлмарĕ. Çеçпĕл Мишши çуралнă куна хатĕрленес пирки тĕркĕшӳ пырать. Украинăран çынсем килмелле. Çакă обком çыннисене хыпăнтарать. Вĕсем вăтанасшăн мар. Вĕсем килес пулмасан, пĕр шавсăр, паллăсăр иртсе кайĕччĕ уяв, президиума пĕр пысăк чиновник те пырса лармĕччĕ. Манăн вăрçă чухне Çеçпĕле асăнса çырнă сăвăсем пурччĕ. Халĕ çавсене якатса ларатăп. Чăваш поэчĕ тени халĕ ниме те пĕлтермест.

## Ноябрь

**7.** Демонстрацире пултăм, трибунăра кăшт анчах тăркаларăм та антăм, Виктор Родионов артиста коньяк ĕçтертĕм, университет директорĕпе Сайкинпа калаçса утса çӳрерĕм, киле таврăнтăм. Çапла ман уяв иртсе кайрĕ, шухăш та, ĕмĕт те пămарĕ. Çывăрма хăтлантăм, ыйăх килмен пирки Ф. Панферовăн «Бруски» романне вуларăм. Ăна ĕлĕк критиксем каçса кайсах мухтатчĕç. Ахаль çырнă, чĕлхе илемĕ çук, характерсем эрех ĕçнĕ чух кăна сисĕнкелеççĕ. Федор Иванович хăй кăмăллă çынччĕ, сыпма юрататчĕ. Пирĕн ун пек роман та, чăн-чăн чăвашла чĕлхи те çук.

**21.** Çеçпĕл юбилейĕ шавласа иртсе кайрĕ те литературăри пурнăç вилнĕ пекех шăпланчĕ. Вырăсла калаçрĕç. ...«К. Иванов» кĕнекене иккĕмĕш хут кăларма хатĕрленетĕп. Шухăш пăтранса кайрĕ, пĕрре çыратăп, тепре тӳрлететĕп, сукмака кĕрейместĕп. Шухăш вăрăмланса, пăтрашса каять. Эпĕ хулара ĕçлейместĕп. Ĕнер ман сăвăсене вырăсла Ф. Мокеев телевиденире вуласа пачĕ. Туса çитермен, васканă.

Ку уйăхра никам та çырмасть. Чипер еврей А. Бродский анчах çырнине паян илтĕм: подстрочниксем ыйтать. Эх, чăваш чĕлхине! Ӳсмест, пуянланмасть, «подстрочник» сăмаха ăнланмалла чăвашла çырма çук. Чăвашла сăвă саккунлă мар пек туйăнать. Ăна вырăсла начар каласа парсан, ăна сăвă вырăнне хураççĕ. Ун хакĕ автортан мар, куçараканран анчах килет.

**22.** Ишлей шкулĕнчен пысăк автобус ярса пачĕç. Питĕ хатĕрленсе, кĕнекесен выставки тусах кĕтсе илнĕ. Сивĕрех залра вĕренекенсем нумай пухăннăччĕ. Чăваш чĕлхипе чăваш литературине вĕренекенсем чипер тухса каларĕç, эпĕ 68 çул тултарасса асăнчĕç. Леш пысăк автобуспа киле таврăнтăм. Вĕренекенсем ушкăнăн тухса, ман сăвăсемпе поэмăсене каласа пани тĕлĕнтерчĕ. Чăваш чĕлхине çӳлтен хĕстерсе пырсан та, аялта, халăх хушшинче, çĕр çинче иккен чăваш чĕлхи! Пĕр çĕклем ыйтусем парса тултарчĕç.

**23.** Ирех тăрса ларсан та, «К. Иванов» кĕнекене тӳрлетсе çырасси сĕтел çинче кĕтсех выртсан та, перо тытас килмест. Шухăшсем пăтранчăк, нумай калас килет, кĕскен çырмалла. Иванов мана пурнăçра тарăхтарчĕ, тĕрĕс калассине калаймарăм. Манăн политика чĕлхи çукрах. Иванов çап-çамрăклах çырма пăрахнă. Эпĕ ватăлсан, ăна чĕртес тесе тарăхатăп. Ку уйăх, темиçе ĕçе тытса пăхсан та, ăнăçсăр иртет. Урам йĕпе, çанталăк ухмаха тухнă.

Ӳнер шкулта учебниксем куртăм. Вырăс литературин икĕ ĕмĕр хушшинчи писательсен хушшинче Твардовский. Эпĕ ăна çамрăк чухне курнăччĕ, вăтăр çул хушши чĕп-чĕрĕ чух унпа калаçнăччă. Вăл «Нарспи» поэмăна куçарасшăнччĕ. Шупашкарти ухмахсем пирки анчах ку ĕç пулмарĕ. Тăшмансем тĕрмепе хăратса пурăнчĕç, ыттисене тăлларĕç. Чăваш литературине ертсе пыракан пеккисем!

**25.** «Советская Чувашия» хаçатра Шупуççынни çинчен статья тухнă. Вăл ырă çын, çуралнăранпа 80 çул тулнă иккен. Эпĕ ăна чи малтан 1930 çулта Шупашкарта тĕл пулнăччĕ. Эпĕ чăваш писательсен съездне килнĕччĕ, ман Мускава университета кĕме васкамаллаччĕ. Атăл хĕрринче Ялавинпа Шăпчăка курах кайрăм. Ялавин: — Сан укçу çук-и? — терĕ. Эпĕ чăваш писательсем пеккисене пĕлместĕмччĕ. Кĕсйери пур укçана кăлартăм та ăна Ялавин туртса илчĕ. Сăра лавкки умĕнче эпĕ тăтăм-тăтăм та ман укçапа сăра пехлекен йĕксĕксем умĕнчен пăрăнса кайрăм. Шупуççынни мана Мускава çитсе ӳкме чăваш писателĕсен Союзĕнчен укçа тыттарчĕ, пысăк инкекрен çăлчĕ. Ун Ивановпа пĕрле тапса тухнă таланчĕ сӳнсе пыратчĕ. Вăл юлашки çулсенче вырăсла çырнăччĕ, юмарт кăмăллă çынччĕ. Тĕлĕнмелле: вăл ман пекех ноябрĕн 26-мĕшĕнче çуралнă иккен. Кондратовичăн «А. Твардовский» кĕнекине пăхса тухрăм. Твардовский ман пекех сăвăсем вулама юратман, ман пекех нумай çырнă, çырнисене кайран хăйĕн кĕнекисене кĕртмен. Çамрăк чух ман пекех выçă-тутă пурăннă, инкек-синкек тӳснĕ. Ман пекех Пушкинпа Лермонтова, Некрасова, Толстоя юратнă...

**27.** Ĕнер хам çуралнă кун ирех Горькие тухса кайрăм, кунĕпех шăнса тарăхрăм. Эпир тăваттăн машина илнĕ хыççăн Шупашкара çурçĕр тĕлĕнче анчах килсе çитрĕмĕр. Çул яп-яка пăрлăччĕ. Ырса сĕлпĕр кайнă хыççăн эпĕ 12 сехет çывăрнă, тĕлĕкре ним те курман. Çапла ĕнтĕ, утмăл саккăр тултартăм, — савăнăç та, хуйхă-суйхă та çук. Сăвăсем те пуçа кĕмеççĕ, «К. Иванов» кĕнекене те кĕвви кĕмест. Чăваш чĕлхи те, чăваш литератури те аталанни сисĕнмест, чуна савăнтармасть. Ку уйăхра пĕтĕмпе икĕ çыру анчах илтĕм. «Позабыт» текен юрă аса килет.

## Декабрь

**3.** Иртсе кайнă кунсенче сунаспа чирлерĕм, ниçта та тухса çӳреймерĕм. Ноябрь ăнăçсăр иртсе кайрĕ, алла тытнă пĕр ĕç те кĕвве кĕрсех пымарĕ, сапаланчĕ. Пилĕк сехетре тăтăм, шухăш тĕвĕленмерĕ. Ĕçлеме манса кайнă.

**4.** Хаçатра хоккей чемпионачĕ çинчен хыпар пур. Чехословакире «Дукла» текен команда пур иккен. Ку Дукла чуна кăларнăччĕ. Унта пирĕн корпус 1944 çулхи пĕр кĕркунне çапăçнăччĕ. Эпĕ ун пирки 31-мĕш танк корпусĕн историнче çырнăччĕ, сăвăсенче аса илмен. Çанталăк ухмаха тухса кайнă: йĕп-йĕпе. Кун пек

тамашана эпĕ ĕмĕрте курман. Шартлама сивĕ пулаканччĕ декабрь.

**27.** Ирхине Мускав патĕнчен санаторирен таврăнтăм. Пĕр хыпар — туртма пăрахнăччĕ. Килсе çитиччен туртма тытăнтăм. Шупашкар çынни пулса тăтăм. Çырусем килсе тулнă, «Советская Чувашия» хаçатра «Аслатиллĕ çумăр» поэма çапăнса тухнă. Ĕлĕкрех савăнтаратчĕ, халĕ çеç çук, чун хытнă. Мускавран Ленăпа Старшинов ăсатса ячĕç. Эпĕ хамăн халăха кирлĕ мар, унран татăлса ӳкнĕ турат пек çапкаланса çӳретĕп. Шупашкар чăваш халăхĕнчен сивĕтекен вырăн пулнă, халĕ те çаплах. Пысăк вырăнсенче чăваша тиркекен, анчах хăйсене янтă укçа илесшĕн çеç чăваш текен çын пеккисем лараççĕ. Чăваш орфографине пĕлмен, пĕлес текен марсем, чăваш халăхне ертсе пырас текенсем правительствăра лараççĕ, хăйсене тухса калама докладсем, статьясем çыртараççĕ. Мăшкăл! Кун пек кахал ĕмĕр хăçан та пулин пулнă-ши?

## 1980,
## Нарăс

**1.** Чăнах та хĕл килсе çитрĕ. Шартлама сивĕ кун ăшă çырусем çыртăм. Шундику, Карелину, Имбовиц, Насырову — Белебей. Брюзгаловой — Сургут, Сотникову — Москва. Çырас килмест, Шупашкарти тиексем пирки чун сивĕннĕ. Нарăс — К. Иванов уйăхĕ, Нарспи çуралнă уйăх.

**7.** Читал «Литературную газету», вышедшую 6 февраля. Роберт Рождественский считает себя наследником Маяковского: я почти весь земной шар обошел. Где его корни? Стихотворение «Корни».

Над землею картинно
Блещут крылья ветвей.

Под землей —
Паутина
Корявых корней.

Простираются корни
Туда и сюда,
Но друг с другом не спорят
Они никогда.

Идет вечная борьба за жизнь, в этом диалектика, основа развития жизни. Глупость стихоплета! Вырăс поэчĕсем теккеннисем пĕтĕм тĕнче тăрăх чаппа мухтав шыраса çӳреççĕ, хăйсем çуралнă çĕре пĕлмеççĕ те, пĕлесшĕн те мар. Смеляков, Твардовский, Исаковский, Ручьев. Кусем вырăс чунлă. Эпĕ вĕсемпе туслăччĕ.

**19.** Ĕнер Мускавран Ленăран питĕ чуна савăнтаракан парне илтĕм. Вергилий кĕнеки — унта «Энеида» та пур. Ăна Брюсов куçарнине ĕлĕк-авал вуланăччĕ.

**21.** Иван Смирнов, ырă вырăс ачи, хăй куçарнă «Аслатиллĕ çумăр» поэмăна Ярославль хулинчен ярса пачĕ. «Северный рабочий» хаçатра тухнă. Унччен «Советская Чувашия» хаçатра çапăннăччĕ. Чăваш писателĕсем чăвашлине, вăл тахçан ĕлĕк тухсан та, вуламан иккен. «К. Иванов» кĕнекене кăшт анчах тӳрлеткелесе издательствăна леçсе памалла. Чун тулашать, пуç ĕçлемест, алă хут патне пымасть. Пĕр уйăх ĕнтĕ тарăхатăп. Пуçлăхсем тăван чĕлхене юратманни, çыракансене çын вырăнне хуманни чуна хуçать. Иванов ун пек шуйттансем çинчен:

Тăванне те палламасть,
Чăвашла та калаçмасть, —

тесе çырни халĕ те тĕрĕс. Ĕлĕкхи тиек хăй пӳрт лартнă, лаша тытнă. Халĕ йĕксĕксем дачăра, вĕсен хăйсем куллен халăхран вăрттăн чыхма распределитель. Вĕсене шоферсем ир те каç та турттараççĕ, вĕсем валли докладсем, кĕнекесем çыракансем те пур.

**27.** Тахçанах çырнă та пăрахнă «Чăваш мунчи» текен япалана тӳрлеткелесе, çĕнĕрен сыпăксем хушкаласа ларатăп та, уткаласа çӳретĕп те, выртса

шухăшлатăп. Манăн кичем пурнăçра çĕнни çук, иртсе кайни çеç аса килет те перо тыттаркалать. Чăваш литератури такамсем ертсе пăтратса пынипе малалла каяссି курăнмасть, кăмăла хуçать. Февраль-нарăс иртсе каять, март-пушă уйăх çитет. Чун пушă, чĕре тарăхать. Композиторсен пленумĕ. Композиторсем çинчен калаçни сисĕнсех каймасть. Пуçлăхсем чăвашла калаçма та юратман çынсем, пĕр-пĕр паллă чăваш вилсе кайсан, некролог айне хăйсен хушамачĕсене ларттараççĕ, лартмасан çиленеççĕ. Çын леш тĕнчене кайнă чухне савăнаççĕ, хăйсем палла тухса тăраççĕ. Ку пурнăçра сăвă çырмалла-и, эрех ĕçмелле-и!

## Март — пушă уйăх

**1.** Кокель художник çинчен «Советская Чувашия» паян каласа парать — пĕр пит-страница. Эпĕ ăна 1946 çул Харьков хулинче Дмитриевский художник, манпа пĕрле «Вперед, к победе!» хаçат редакцинче ĕçленĕ чипер çын пулăшнипе шыраса тупнăччĕ. Вăл Шупашкар хулине куçса килесшĕнччĕ. Ун пирки эпĕ чăваш совнаркомне çырса янăччĕ те пĕр çыру та илменччĕ. Ун чухне совнаркомра заместитель пулса К. Евлампьев ĕçлетчĕ, 1937 çул çынсене хĕсĕрленĕ чухне çунатланса хăпарнă çын пекки. Вăл физикчĕ, кайран истори наукисен кандидачĕ пулса тăчĕ, искусствăпа литература ĕçĕсене ертсе пыранçи пулчĕ, çăп-çăмăл карьера турĕ, институт директорĕ пулса тăчĕ. Вăл пăтратса пынипе Эрзя та чăваш çĕршывне килеймерĕ.

**2.** ...«Агидель» журнал Гафури çинчен статья çырма ыйтать. Çырура ытла хĕрсе, чаракран тухса, Гафурие «великий основоположник татарской и башкирской советской литературы» ят панă. Гафури аван çынччĕ, анчах великиех мар, тутарла анчах çыратчĕ. Ун сăввисене пушкăртла куçараççĕ. Вуланă чух кулăшла туйăнать, иптлилер вырăнне, иптлитер, тав баласы — тав балаһы, кайда — кайза.З сасă, акăлчанла the пек.

**5.** «Чăваш мунчи» поэмăпа ларатăп та, выртатăп та, çÿретĕп те. Нумай вăхăт тăкăсланнă хыççăн çуралнă çĕршыва аса илсен, çырма екки ячĕ, сивĕнсе пыракан чуна вĕрилентерчĕ. Шупашкар чăваш хули пулсан та, унта вырăса тухма сиккелекен пуçлăхсем тарăхтарнипе, яланах президиумсенче ларса хăйсене ăслă пек кăтартнине ман çырасах килмест. Эпĕ Шупашкарта пĕр чипер япала та çырман, яланах яла тухса тарнă, мунчара та çырнă. Çамрăк чух чуна чаракан çук.

Çанталăк сулхăнрах тăрать, Федоровăн «Арçуринчи» пек лапка-лапка юр çăвать, мулкач ниçта та йĕр тумасть пуль. Ăна персе те, химипе анратса та вĕлерсе пĕтернĕ. Мĕскĕн чăваш сăвăçи мĕн çинчен çырĕ-ши? Çутçанталăк вилнĕ чух поэтăн чунĕ те вилет. Иванова поэт пулма Силпи çутçанталăкĕ вăй панă. Унран уйăрăлсан, вăл ÿт-тирĕпе кăна мар, чунĕпе те чирленĕ, хăрнă. Çутçанталăксăр эстетика науки çук. Манпа пĕрлех Силпи те пĕтĕ. Ун çинчен çырса хăварас пулать. Кам та пулин хăçан пулин те вулĕ, Шупашкар чăвашĕсем вырăсланса пĕтсен те вырăсла куçарĕ. Хăй те чирлĕ Çеçпĕл чăваш поэзине вирьяллатса чирлетрĕ те ун çулне пÿлсе лартрĕ. Ку чиртен эпĕ те хăтăлаймастăп.

**24.** Эпĕ вăрçă хыççăн «Дружба» ятлă альманах кăларма тытăннăччĕ, вырăсла çыракансене пулăшас тенĕччĕ, пĕрремĕш кĕнекине хам кăларнăччĕ. Унта Евстафьев чăваш, Иван Пиняев мăкшă сăввисене кĕртнĕччĕ. Халĕ вырăсла çыракан чăвашсем питĕ ĕрчесе кайрĕç те чăвашла çыракан чăн-чăн çынсене тиркеме тытăнчĕç, вилнисене те сума сумаççĕ. Вĕсемшĕн Иванов та ним те мар. Иванов çинчен çырнă статьясене, хăйсем вырăсланнă чăвашсем ыйтнипе, альманаха патăм та, кĕскетнĕ, питĕ кирлĕ вырăнсене кăлара-кăлара вăркăтнă. Алла лекнĕ стать-

ясене каялла памарăм. Вырăсланнă мĕскĕн чăвашсенчен мăшкăл тӳсес килмест. Пурнăç, К. Иванов калашле, пăсăлса кайрĕ: вырăса тухас теççĕ намăссăрсем. Çанталăк çаплах сивĕ, кăнтăрла асфальт йĕпенет пулин те, кун хĕллехи пекех хаяр.

**27.** В. Туркинран вăрăм çыру та хăйĕн кĕнекине, Левандовскирен çыру илтĕм. Вĕсене иккĕшне те çыртăм. Шупашкарта идеологи пирки пысăк конференци пырать. Каймарăм, ниçта çӳрес те, ĕç пирки калаçас та килмест. Литературăна юратакан çук, ун ячĕпе вырăнта ларакансем, палкакансем нумай. Писатель пеккисем вăрăм çыраççĕ — укçа кирлĕ. Илем те, ăс та çук. Пурте пĕр вăхăтлăх. Ыран мĕн пулĕ, кама мĕн кирлĕ, шухăш та, тĕллев те çук. Çанталăк сивĕ тăрсан та юр ирĕлет.

«Мунча» поэма пĕр вырăнта чăхăмласа тăчĕ те чарăнчĕ. Ĕлĕк кунне 150—200 йĕрке çыраканччĕ, ĕç хăй тĕллĕнех ăнса пыратчĕ, ĕмĕт чупатчĕ. Халĕ те вăй пур, ыранхине шанни çук, чĕлхе тăлланать. Пысăк вырăнтисем çилентереççĕ, шухăша тăллаççĕ. Поэзи самани иртсе кайрĕ.

Ашмарин. Сл. I, стр. 310

«Чăвашсем каланă тăрăх (руссизм) арçури çынна питĕ кăтăклать, хăй ахăлтатать, хăй кăтăклать».

Ку руссизм халĕ чăваш чĕлхинче, чăваш çыравçисем вырăсланса кайнипе, хуçа пулса тăчĕ, телефон тăрăх калаçаççĕ, уй-хир тăрăх, çул тăрăх çӳреççĕ, телефонпа мар, çулпа та мар, хирпе те мар. Ку инкекрен хăтăлма çук.

«Мункун кунĕ ирхине малтан арçын килсен, чăхсем çăмарта сахал тăвать, теççĕ.

Ай-хай пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать, ар пуçĕнчи çавра çĕлĕк пек. Арçурин çавăнран вара лаша çине утлану пулмарĕ. Ив. Çапупа».

**31.** Театрта телевиденипе «Тутимĕр» пьесăн пĕр сыпăкне ӳкернĕ чух пултăм, мăк-мак сăмах каларăм, чун уçăлсах каймарĕ, режиссер Валерий Яковлев вăрăмрах каларĕ, мана пысăк çăлтăр терĕ. Çӳлти чиновниксем чăваш чĕлхине пĕтерессĕн мĕкĕрленнĕ чухне çăлтăр пулни кирлĕ-ши?

Çанталăк хĕвелленет, урамра юрпа пăр. Ял çыннисем юр хырма килеççĕ, çулла тырă вырма яла хуларисем каяççĕ. Ку тамаша ăçта пырса çитерĕ?

## Апрель — ака уйăхĕ

**1.** Улттăра ака тума каяс пек тăтăм, «Мунча трактачĕ» çырасшăн пултăм. Ĕç каймасть, лаша пек тăлланать, чăхăмланать. Ку тарăху ман хулара вунă çул ытла пырать. Çуралнă вырăнта çĕр çинче çӳресе, çĕр шăршине туйса çырмалла. Эпĕ йывăç турачĕ пек татăлса ӳкрĕм те хăратăп. Тымартан татăлсан, чĕрĕлме май çук. Чĕлхе те çулçă пек хăрать. Нумай çын хăй халăхĕнчен тухса ӳксе хăрнă. Культура хулара, чун культури чăвашăн халăхра, ялта.

Ĕнер Брежнева Ленин премине писатель тесе пачĕç, великий терĕç, унтан вĕренме хушрĕç.

**5.** Ĕнер киностудире пултăм, тем валли хама ӳкерчĕç. Кун пек вăйă мана килĕшмест. Паян театра каймалла, каллех хама ӳкерттермелле. Çамрăк чухне ку япала савăнтаратчĕ пулĕ.

**7.** Ульяновскран Ж. А. Трофимовран «Начало жизни» кĕнеке те, çыру та илтĕм. Кунсем ĕçсĕр, ăнăçсăр иртсе кайрĕç.

Ĕнер А. Ургалкинăн 70 çуллăхне каймаллаччĕ. Чĕнӳ пулмарĕ, çавăнпа каймарăм, президиумра ларас килмерĕ. Çанталăк ăшă иккенни пӳлĕмре те сисĕнет.

**11.** Çыракан, ӳкерекен, юрлакан çынсен пленумĕ пулса иртрĕ. Мана унта председатель пекки туса лартнăччĕ. Эпĕ ним те сăмах чĕнмерĕм. Калаçакансем нумай. Кайран чăваш республики çинчен калакан, хăпартакан икĕ фильм пулчĕ.

Пĕр шухăша каймасăрах килте çывăртăм, кая юлса вăрантăм. Пленумра пĕр чăваш А. Иванов, «Прогресс» колхоз председателĕ, анчах чăвашла калаçрĕ. Эпир халĕ чăваш халăхĕ çинчен вырăсла пĕли-пĕлми калаçатпăр, тăван чĕлхе вăйне ĕненместпĕр. Чăваш искусстви ют чунпа ӳсме пултараймасть, ăна хăйĕн чунĕ кирлĕ. Вырăсла калаçакан Н. Овчинникова чăваш чунĕ хăйĕн мастерскойĕнче вăл форточка уçнă чухне çӳлтен персе ӳкернĕ. Чăваш çилли ун патне çил пулса кĕнĕ. Пултарулăхра икĕ япала: чĕлхе те чун. Иккĕш пĕр-пĕринпе килĕштермесен ĕç пулмасть. Çынпа халăх. Çын хăйĕн халăхĕнчен тухса ӳксен, çын мар, вăл камшăн ĕçлени, çунни паллă мар...

**15.** Уйăхăн çурри иртсе кайсан та ман хирте çурхи ака ĕç пымасть, «Нарспипе Сетнер» трагедие çĕнетме шухăшларăм та, чун чуман лаша пек пĕр вырăнта кукалесе тăрать, шăл витĕр шăхăрас килет те пӳртре шăхăрма юрамасть, шăхăрма шăлсем те çук, малтисем ӳкнĕ. Ĕнер В. Исаевпа В. Овчаров килсе ларчĕç. Пĕри — ирхине, тепри каçхине. Хăвăн ăс пулмасан, никамран та илме çук. Çутçанталăка тухсан анчах ăс ĕçлеме тытăнать.

**24.** В. Цыбин, ссылаясь на утерю трех глав подстрочников, не выполнил договорное обязательство, не представил перевод поэмы в издательство «Современник». Сердитое письмо Н. И. Нефедову. Ответное письмо и газета «Советская Чувашия» Ж. А. Трофимову — Ульяновск. Послал поэму «Дед Кельбук» вместо поэмы «Земля». Как завершится дело, буду ждать. Çиленнĕ чухне вырăсла çыртăм. Пĕрмаях ăш тулашса тăрать. К. Ивановăн 90-çуллăхне хатĕрленни сисĕнмест. Правительство комиссийĕ пур, тăрăшакан çук.

Халĕ чăваш писателĕ пеккисем вырăсла çыраççĕ, чăвашла куçарттараççĕ, чăвашларан тепĕр хут вырăсла куçарттараççĕ. Вĕсем авторитетлă, чинлă. Ку мăшкăл халĕ чаплă, унран хăтăлма çук, вырăсланни чăн-чăн пурнăç йĕрки пулса тăчĕ.

## Ноябрь

**20.** Виççĕмĕш кун ĕнтĕ кинооператорсем чуна илеççĕ, вĕсем тăваттăн, пĕри Ялаур чăвашĕ Геннадий Исаев. Вĕçне çитмен-ха, хирте те, вăрманта та ӳкермелле. Кăна та аппарат умĕнче çырма тивет, тата ку юлташсемпе Мускава та каймалла.

**29.** Кахала ернĕрен хамăн пурнăç пирки çырас килмерĕ. Паян каçхине Мускава поездпа тухса каятăп. Унта чăваш культурин кунĕсем пулса иртмелле. Юлашки кунсенче «Чăваш мунчипе» аппаланса лартăм, шухăш капланса килнипе шалтан шала кĕрсе кайрăм та каялла сиксе тухаймарăм. Ватăлса пынă чух шухăш çырма тăллантарать иккен. Поэзире ăслă пулма юрамасть. Мĕн аса килет — çыр та çыр, кама та пулин вĕрентме ан хătлан. Хĕл ларса çитрĕ пулас. Йĕпе-сапа килекиле йăлăхтарнă хыççăн лапка-лапка юр çăвать.

## Декабрь

**18.** Юрлă çумăр çуса тăнă хыççăн çанталăк хĕл енне туртăнчĕ, кăшт шăнтрĕ. Шуса ӳкме пулать, ним те ĕçлес килмест. Пурте укçа та чап илме тăрăшаççĕ, президиума кĕрсе ларма хапсăнаççĕ. Пĕр вăхăт хамăн пурнăç çинчен кулленех çырса пырасшăнчĕ, халĕ пероран та, шурă хутран та сивĕнтĕм.

**21.** Ĕнер облаçри партконференци хупăнчĕ. Унта литература пирки пĕр сăмах та илтĕнсе каймарĕ, съезда та пĕр писатель те, художник те, композитор та кайма делегата лекмерĕ. Обкомрисем чăваш халăхĕшĕн тăрăшакансене, ун чунне юратакансене сума сумаççĕ, хăйсем чăвашла калаçма та, çырма та пĕлмеççĕ, пĕлесшĕн

те мар. Вĕсем пысăк вырăна кĕрсе ларма анчах хăйсене чăваш теççĕ, Мускава пырса тухсан хăйсене вырăс теççĕ е чăвашла пĕлмене пereççĕ. Обкомрисем чăваш республикинчен Шупашкар уезĕ туса хучĕç. Хăйсене кам та пулин урлă калас пулсан, ăна пĕр самантрах националист ят параççĕ, ун ятне шурă хут çине çырсах хураççĕ, вара лешĕ Шупашкартан тухса тарать, Мускавра колбаса çисе пурăнать, хăнк та тумасть. Ăна айăплакансем чăваш халăхĕнчен питĕрĕнсе дачăра пурăнаççĕ, унта чăвашсем пырса кĕресрен вĕсене милиционерсем сыхлаççĕ. Эпĕ çитмĕле кайрăм, чăваша мухтаса çырнăшăн темле усал сăмах та илтсе куртăм, ман пеккисене, мĕскĕне лекнĕ çынсене, пĕр-пĕр йăнăш ыранă чухне постановление кĕртсе хураççĕ, кун пек хутсене дачăри çын пеккисем хăйсем çырмаççĕ, тарçăсене çырма хушаççĕ. Лешсем вара Ленинăн наци политикине сыхланă пек пулса сиксе ӳкеççĕ, перосене шăхăртса лараççĕ. Пирĕн пурăнăç çапла пырать, вăл нихçан та улшăнас çук.

Пире пĕр-пĕр конференцие чĕннĕ чухне вырăсла уважаемый, чăвашла хисеплĕ теççĕ. Хисеп те, уважение те çук, конференцире колбаса кăшт коридорта çитереççĕ, килте океан пулли çисе ларатпăр. Какай шăрши дачăра анчах.

**22.** Паян чи кĕске кун. Çанталăк хĕл варринче те йĕпе-сапаллă тăнипе ăс та кĕскелчĕ, çĕр çинче мĕн пулса тăнине ăнланми пулчĕ. Пурнăç та кăçал хĕсĕнсе пычĕ, ял халăхĕ хулана килсе тулнă. Урама тухсан, ĕççĕр çӳрекенсем нумай, магазинсенче те лăк тулли. Темиçе хут та сĕтел хушшине кĕре-кĕре лартăм, çырас килет, кĕскелнĕ ăс ĕçлемест. Çырсан, кам вулĕ? Советсен çуртĕнчи çынсем, чăваш халăхне ертсе пыракансем, пĕр-пĕринпе вырăсла калаçаççĕ, юрăхлă сăмах тупайман пирки такăнаççĕ, маччаналла пăхса илеççĕ. ...Бекшанскирен çыру илтĕм. Ватă çын çĕнĕ çулпа тав тăвать, Атăл хĕрринче сăра алтăрпа ĕçес пек шухăшлать. Вăл çамрăк чух хĕрӳ çын пулнă, Çеçпĕл Мишшипе туслашнă. Вăл халĕ те паттăр шухăшлă. Ун пек Столяров Сергей пурччĕ. Ăна Шăмăршă райком секретарĕ машинăпа таптаса Советсен çурчĕ умĕнче вĕлернĕ. Ку каппайчăк çынна вĕлернĕ. Шухăша, ĕмĕте те вĕлерекенсем пур. Вĕсем чи малтанах чăвашла шухăшлама чараççĕ, вара аптраса ӳкнĕ çын шухăшлама пăрахать, чăвашлăхран тухса ӳкет те вырăс пулаймасть...

**23.** «Советская Чувашия» хаçатра Иванов премине партарма тӳсме çук йĕксĕксен статйи тухнă.

Театртан виçĕ парик çухалнă та пысăк çуртри пĕр хĕрарăма пĕрин хыççăн тепри пырса сутнă, ăна Кĕтерне патша сăнарĕ парса çӳренĕ.

Кĕтерне патша чухне Фонвизин икĕ комеди çырнă. Шупашкарта чăваш Фонвизинĕ пулĕ-ши, пĕр комеди пулин те çырĕ-ши? Халăх ĕнси çинче ларакансем халăхран кулаççĕ. Хăйсенчен кулма вăхăт çитĕ-ши? Пĕр тарăхмасăр шухăшлама пăрахрăм. Ялта пурнăç ултавне курмастăмччĕ, пĕр ырă шухăш хыççăн тепри килех тăратчĕ, произведени хыççăн произведени çыраттăм. Хуйхă-суйхă килсех тăчĕ, пĕтĕм пурнăçа пăтратса ячĕ. Халăх хулана тарать, ырлăха мар ку, хурлăха анчах. Хула историре илеме мар, вăрра вĕрентнĕ, тĕрĕс чуна пăснă, пĕри теприне унта юратман, çĕçĕ хăйранă.

20-мĕш çулсенче кунти Çĕрпӳ енчи Старак ялĕнчен чăвашсем куçса килнĕччĕ, Соловьевка поселок тунăччĕ. Мишша Дабаев Слакпуç хĕрне çураççан, пирĕн яла вирьял туйĕ кĕрлесе çитнĕччĕ. Акăш-макăш намăссăр алама сăмахлă юрăсем такмаклатма тытăннăччĕ. Çакна илтсен, пирĕн ял халăхĕ туйран тухса тарнăччĕ. Слакпуççем вăтанма пĕлетчĕç. Халĕ вĕсем пăсăлса кайрĕç, килсерен кумăшка юхта-

раççě, ÿсĕрĕлсен йĕреççĕ, çаканса вилеççĕ. Кам айăплă? Вĕсем хăйсем-и, самана-и?

**27.** ...Янка Купала çуралнăранпа 100 çул. Минскри ун музейĕ аса юлнисене çырма ыйтать. Вăл Элкерпе Шелепи патĕнче пурăнатчĕ, вĕсене çын вырăнне хумастчĕ, хăй кăна чаплăччĕ. Ăна белоруссем турă туса хунă, хамăрăн Шелепие чăвашсем мĕскĕнре тытатчĕç. Шелепи çуралнăранпа 100 çул. Ун пирки шарлакан вирьял Шупашкарĕнче çук. Аякран çын илемĕ курăнать. Эпĕ 1936 çул Шелепи çинчен «Красная Башкирия» хаçатра статья кăларнăччĕ, 1938 çул Ульяновскра «Пролетарский путь» хаçатра та, «Литературная хаçатра» та çырнăччĕ. Халĕ Шупашкарта чун туртмасть...

Радио Çеçпĕл премийĕсене валеçсе тухнине пĕлтерчĕ. Çуллен укçа париччен, шухăша каясчĕ, поэта памятник лартасчĕ! Иванов та Атăл хĕрринче питĕ мĕскĕн, пĕчиккĕн ларать. Ăна хул хушшинче чиксе вăрласа кайма пулать. Пĕр урамра та, Атăл хĕрринче те автономи сисĕнмест. Шупашкар уесĕ! Обкомрисем автономи ячĕпе вырăнсенче лараççĕ, хăйсем чăваш турачĕ çинче ларнине манса каяççĕ, хăйсем чăвашла калаçма та йĕрĕнеççĕ, дачисене чăваш шăрши пырса кĕресрен хăраççĕ.

**30.** Советсен çуртĕнче артистсене, писательсене тав тăвакан хутсем пачĕç. Эпĕ те сиксе юлмарăм, фотографсен куçне пырса перĕнтĕм. Пурнăçра пĕр хыпар: 20 çыру çыртăм пулĕ, пĕр çынран çыру илтĕм. Пĕр еврей кăна, Бродский анчах ман çырăва илнине пĕлтерчĕ. Тутартан та, вырăсран, чăвашран çыру çук, пурин те пурнăçра типтерĕ çук иккен. «Çĕнĕ çул курки» çырса çĕрле те çывăраймарăм, яланхи пек сапаланса кайрăм, шухăша пĕр чăмăра кĕртме пĕлмерĕм. Пуçра турăх пирки çырма хитре шухăш пурччĕ.

Мускавра-и е ытти тĕлте-и
Пурăнма тивсеччĕ, час-часах
Хам чăваш пирки телейĕм
Пуррине илтеттĕм пĕр сăмах...

Ĕлĕкрен Канашпа Тĕрлемес станцинче чăвашсем питĕ тутлă турăх, кăмака чулсенче вĕретсе пĕçерсе сутнăччĕ. Ун тутине çынсем аса илеççĕ, чăвашла ятне хăйсем пăсса калаççĕ. Халĕ ку тутлă турăх ниçта та çук, чăвашăн мухтанмалли те çук, Канашра та, Тĕрлемесре те вăрă ĕрчесе кайнă.

## 1981

### Январь — кăрлач

**1.** Кунĕпех «Çĕнĕ çул курки» япалана тÿрлетсе, çĕнĕ шухăшсем хуша-хуша лартăм. Ăна туса пĕтерĕп-ши, е ыттисене пăрахнă пек, пăрахăп-ши? Тĕлĕнмелле те, тарăхмалла та çанталăк пирĕн, шартлама хĕл варринче çумăр çăвать. Пурăнăç, пур енчен пăхсан та, ăнланма çук. Ĕлĕк çĕнĕ çул уявĕнче какай та, пулă та пулаканччĕ. Кĕрÿ виçĕ тĕрлĕ океан пуллипе яшка пĕçернĕ. Погильдяков, вырăсла çыракан писатель, телефонпа калаçрĕ: вирьял чăвашĕ К. ун çырнине вăрласа К. Иванов премине тăратнă, тет. Литературăра та вăрăсем пур иккен. Ку дневнике тахçан ĕлĕк çутă ĕмĕтпе çырма шанса пуçланăччĕ, вăрăпа пĕтеретĕп.

«Çĕнĕ çул курки» пысăкланса кайрĕ, шухăшпа тулсан юрĕччĕ, куркăра шыв тултарас марччĕ. Ватă чухне сÿтĕлсен, шыв та, эрех те пĕрех ĕнтĕ.

Çакăнпа дневнике хупатăп.

*Пичете Елена УХСАЙ хатĕрлесе панă*